# Пирĕн пурнăç вăййăра

*(Аслă ушкăнсенче ирттермелли уяв сценарийĕ)*

***Т.В. Актисова, Е.А. Павлова,*** *Шупашкарти 35-мĕш ача сачĕн воспитателĕсем*

**Сапăрлăх тĕллевĕсем:** ачасене чăваш халăх культурине, чăваш чĕлхине хисеплеме вĕрентесси; вăййи-куллипе юррисенче илемлĕхе курма хăнăхтарасси; ачасем хушшинчи туслăха çирĕплетесси.

**Пĕлӳ тĕллевĕсем:** чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, юрри-ташшипе, вăййи-куллипе паллаштарасси; ĕçпе çыхăннă ваттисен сăмахĕсене, юрри-ташшисене вĕрентесси; чăваш халăх инструменчĕсемпе паллаштарасси.

**Аталантару тĕллевĕсем:** ачасен тавракурăмне ӳстересси; илемлĕхпе эстетика тĕлĕшĕнчен аталантарасси.

**Кирлĕ хатĕрĕсем:** йывăç макечĕсем, музыка инструменчĕсем (параппан, тункăр, шăнкăрав, çатăрка, шакăртма, йывăç кашăксем).

## У я в   ю х ă м ĕ

Илемлетнĕ зала чăваш тумĕ тăхăннă ачасем карталанса «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» юрра юрласа кĕреççĕ.

Е р т ӳ ç ĕ. Ырă сунса кĕтсе илетпĕр сире, хаклă хăнасем! Пĕлетĕр-и эсир çавăн пек çĕр-шыва? Вăл ĕмĕр аслă, ĕмĕр çамрăк. Унта ĕçлеме те, савăнма та ăста çынсем пурăнаççĕ. Çав халăхăн çĕр пин сăмах упранать, çĕр пин юрă янăрать, çĕр пин тĕрĕ тĕрленет.

1 - м ĕ ш   а ч а.

Акă вăййа тухрăмăр,
Карталанса тăтăмăр.
Юрă юрласа ташлар-и?
Вăйă выляса савнар-и?

2 - м ĕ ш   а ч а.

Чăвашла паян юрлатпăр,
Чăвашла сăвă калатпăр,
Чăваш тумне тăхăнатпăр,

Чăвашла та ак ташлатпăр.

3 - м ĕ ш   а ч а.

Юхтăр юрă, ян янратăр,

Кайтăр инçене.

Ăшшăн-ăшшăн вăл вăраттăр

Çурхи тĕнчене.

Ачасем «Сар каччă» юрă тăрăх пĕчĕк сценка лартса параççĕ.

Х ĕ р   а ч а с е м.

Сар каччă, сар каччă,

Тух-ха урама.

А р ç ы н   а ч а.

Мĕн тума, мĕн тума?

Х ĕ р   а ч а с е м.

Юрă юрлама.

Сар каччă, сар каччă,

Тух-ха урама.

А р ç ы н   а ч а.

Мĕн тума, мĕн тума?

Х ĕ р   а ч а с е м.

Ташă ташлама.

Сар каччă, сар каччă,

Тух-ха урама.

А р ç ы н   а ч а.

Мĕн тума, мĕн тума?

Х ĕ р   а ч а с е м.

Вăйă выляма.

4 - м ĕ ш   а ч а.

Кил, кил выляма.

Ан кил, ан кил çапăçма.

Юрлăпăр та ташлăпăр,

Ĕмĕр туслă пурнăпăр!

«Кик чунăм» вăйă.

А ч а с е м.

Кик, кик, кик чунăм!

Йăкăр, йăкăр шутарам,

Шутар пике тутарам.

Мĕн тăватăн, Васса?

В а ç ç а. Такмак калатăп.

Çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă,

Çĕр пин ташă пирĕн пур.

Чĕлхе çепĕç, чунсем ырă,

Эпир – чăваш! Ай тур-тур!

Мĕн тăватăн, Анюк?

А н ю к. Ташă ташлатăп.

Анюк ташлать. Ачасем алă çупаççĕ.

Е р т ӳ ç ĕ. «Юрлама юратаканăн чунĕ те пуян», – тенĕ ваттисем. Питĕ илемлĕ юрă пĕлеççĕ пирĕн ачасем. Итлесе пăхар-ха вĕсене.

Ачасем «Тăванлăх юрри» (Сăвви Васлей Давыдов-Анатрин, кĕвви Анатолий Никитинăн) юрра юрлаççĕ.

Е р т ӳ ç ĕ. «Чăваш пĕр урипе сăпка çинче, теприпе суха çинче», – тенĕ ĕлĕкхи чăвашсем. Ĕçпе çыхăннă мĕнле ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр эсир, ачасем?

Ачасем пĕрин хыççăн тепри ваттисен сăмахĕсем калаççĕ.

– Этем ырă ĕçĕпе.

– Ĕç вăл – пурнăç илемĕ.

– Куç хăрать те, алă тăвать.

– Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи, ĕçлемесен ан та çи.

– Ăсти епле, ĕçĕ çапла.

– Ӳркенмен ăста пулнă.

– Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.

Е р т ӳ ç ĕ. Çапла, ĕçлеме те, канма та пĕлнĕ чăвашсем.

4 - м ĕ ш   а ч а.

Алла-аллăн тытăнар,

Карталанса çаврăнар.

Атьăр ташша пуçлар-и те?

Ура тапса ташлар-и?

«Атьăр ташша пуçлар-и?» ташă.

А ч а с е м.

Атьăр ташша пуçлар-и те?

Атьăр ташша пуçлар-и?

Ура тапса ташлар-и те?

Ура тапса ташлар-и?

Атьăр ташша пуçлар-и те?

Атьăр ташша пуçлар-и?

Ура хуçса ташлар-и те?

Ура хуçса ташлар-и?

Атьăр ташша пуçлар-и те?

Атьăр ташша пуçлар-и?

Е р т ӳ ç ĕ.

Вăхăт çитрĕ выляма,

Вăхăт çитрĕ шутлама.

5 - м ĕ ш   а ч а.

Пĕрре – пĕрне,

Иккĕ – икерч,

Виççĕ – виçе,

Тăваттă – тăваткал,

Пиллĕк – пилеш,

Улттă – улма,

Çиччĕ – çилĕм,

Саккăр – салма,

Тăххăр – тăрна,

Вуннă – тух!

«Пĕрре, иккĕ, виççĕ, чуп!» вăйă. Уява шур сухаллă Ш е р к к и м у ч и пырса кĕрет.

Ш е р к к и м у ч и. Вылятăр-и, савнăнатăр-и, ачасем?

А ч а с е м. Шеркки мучи, юмах ярса пар-ха пире.

Ш е р к к и м у ч и. Юрать, юрать, итлĕр апла.

Шеркки мучи ачасене И.Я. Яковлев çырнă «Лаша шырани» юмах каласа парать.

Ш е р к к и м у ч и. Юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм. Лашасене пăхма каяс. (*Ачасемпе сывпуллашса тухса каять.*)

6 - м ĕ ш а ч а.

Атьăр вăйă выляма!

Атьăр лаша сутмалла!

Ачасем «Лашалла» вăйă выляççĕ. Вылякансем çаврана мăшăрăн-мăшăрăн тăрса тухаççĕ: пĕрисем – хуçисем, теприсем – лашисем, варринче – лаша илекенĕ.

Л а ш а и л е к е н ĕ. Лаша сутатăн-и?

Х у ç и. Сутатăп.

Л а ш а и л е к е н ĕ. Миçе тенкĕ?

Х у ç и. Виçĕ тенкĕ.

Л а ш а и л е к е н ĕ. Виçĕ пус та памастăп.

Хуçипе лаша илекенĕ тавралла чупаççĕ. Хăшĕ лаши патне маларах çитет, çавă хуçи пулать. Юлаканĕ лаша илекенĕ пулса тăрать.

Е р т ӳ ç ĕ. Чăвашсем хăйсен пушă вăхăтне юрă юрласа, ташласа ирттернĕ. Улахсенче алă ĕçĕ тунă чух тупмалли юмахсем каланă. Эпĕ те сире каласа пăхам-ха, тупсăмне тупаятăр-и?

– Вутсăр-мĕнсĕрех çунатăп, тĕнчене эп ăшăтатăп. (*Хĕвел.*)

– Йывăç тăрринче кĕмĕл çĕрĕ. (*Уйăх.*)

– Тĕпсĕр тинĕсре ахахсем выртаççĕ, йăлтăртатса илеççĕ. (*Çăлтăрсем.*)

– Алăсăр, урасăр алăк уçать. (*Çил.*)

– Пӳрт урлă чĕн йĕвен ывăтрăм. (*Асамат кĕперĕ.*)

Ачасем чăваш халăх инструменчĕсемпе «Линка-линка» кĕвве калаççĕ.

7 - м ĕ ш а ч а.

Çитрĕ пулĕ юрласа,

Çитрĕ пулĕ выляса,

Çитрĕ пулĕ калаçса –

Пирĕн киле каймалла.

8 - м ĕ ш   а ч а.

Тепре юрă пуçлăпăр,

Килелле саланăпăр.

«Пахчи-пахчи» юрă шăранать.

Е р т ӳ ç ĕ. Çакăнпа пирĕн уяв вĕçленчĕ. Чăваш вăйăи-куллипе юррисене ан манăр! Сывă пулăр! Тепре тĕл пуличчен!

Ачасем карталанса «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» юрра юрласа тухса каяççĕ.